**Семенов, Ю. Парнас çинче**

Парнас çннче çап-çут сăртсем нумай,
Йăлтăртатса лараççĕ вутăн-хĕмĕн.
Пĕр сăрчĕн ячĕ - Петĕр Хусанкай,
Хăй майлă  унăн кӳлепи, илемĕ.
Тăван Сиктĕрмепе Шупашкартан
Çав ылтăн палăк курăнать ир-каçăн.
Мускав, София, Прагăсем таран
Чăваш поэзин çăлтăрне сăнаççĕ.
Çав сăрт тавра - çынсем. Кама куран?
Тăхта-ха, сăнĕсем те палăраççĕ.
Пĕри, ав, Сантăр, çĕлĕк çавракан,
Ун çумĕнчи - леш Элтиван - хуралçă.
Патвар та йышлă Аптраман тавраш,
Энтри те Басов, Натали, Сумбайĕ...
Кунта, тăванăм, пĕлĕш-хурăнташ
Çĕрпӳ пасарĕнчи пекех нумайăн.
Пĕри, ав, йĕтĕн сухалли, юрлать,
Кĕрекере симпыл валеçнĕçемĕн;
«Мехел тени мĕскер тени пулать?»
Тилли, Тилли! Ку - эс пуçарнă çемĕ.
Мехел тени çиткелесе пырать,
Пурнатпăр-ха, çӳретпĕр ырă-сывă.
Килĕренех янрать, мухтав турра,
Тиллимĕр, эс шăратнă юрă-сăвă.
Уйлав-хăйлав пурне те илĕртет,
Ăна кашни-пĕр тытăнса пăхасшăн,
Анчах телей пинтен пĕрне тĕллет,
Ытти вара - ан асаплан, тархасшăн.
Эпир пĕрремĕш тĕрĕслев кунне
Хуллен чăтса ирттертĕмĕр пуль тетпĕр.
Çав сăлтавпа асамлă сăрт енне
Чун куçĕпе сăваплăн тинкеретпĕр.
Калаçнă-калаçнах, чăнне калар:
Хăш чух тивĕçеймест чĕре мехелĕ.
Тавах, сапса ларать хĕлхем-кăвар
Поэт пиччемĕр сăрчĕн çут хĕвелĕ.

*Ялав. – 1977. – № 1. – С. 24.*